**Тупа**

Ман çакă сăмахăм — ылхан та тупа.
Тухать çамрăк сассăм чĕре тĕпĕнчен...
Шыв пек юхса иртрĕç кунсем унтанпа,
Нумайăш çухалчĕç хăйсен шавĕнче.

Анчах пĕр куна, пĕр синкерлĕ куна
Манма пултараймăп нихçан, ĕмĕрне:
Çав кун вут хыптарчĕ ман лăпкă чуна,
Телейĕме вăрчĕ куççулĕ ăшне.

...Çил урнăн улатчĕ ула урамра,
Йĕрсе туллашмашкăн сăлтав пулнă ун:
Чăтма йывăр хурлăх нумай кăкăра,
Нумай чĕрене тăрмаланă çав кун.

Чуна çитсе çапрĕ куççульлĕ хыпар:
Етре касса татнă атте пурнăçне...
Виç тăлăх эпир... Виç кăтра пуç çине
Хаяр, шелсĕр вилĕм пăрахрĕ кăвар.

Тин çеç тĕвĕленнĕ çемçе папкасем —
Ларатпăр анне çумĕнче тĕршĕнсе.
Тăватă чунра халь тапать пĕр чĕре:

Инкек уйрӑлми пӗрлештерчӗ пире.

Эп пӑхрӑм чӗнмесӗр анне куҫӗнчен, —
Ялан вӗсем ырӑччӗ — ҫӗмӗрт куҫсем!
Халь хурлӑхӑн сӗмӗ чӗтрет вӗсенче,
Нихҫан ҫак сӗмрен тасалаймӗҫ вӗсем...

...Чӑмаҫҫӗ кунсем ӗмӗрхи авӑрне...
Анчах та иртни шав тухать-ха ума,
Ҫӗршывшӑн пуҫ хунӑ салтак тӑприне
Сар кайӑк иленнӗ нумай та пулмасть;

Куҫҫуль типеймен-ха анне куҫӗнче,
Иртни чӗрине пӑта пек тӑрӑнать, —
Такамӑн алли ман анне ҫумӗнчен
Халь ун ывӑлне уйӑрма талпӑнать!..

«Мир пултӑр», — тееҫҫӗ, ав, халь тӗнчипех...
Шӑв-шавсӑр сунатӑп ҫавнах кил-йышпа.
Ҫӗршывшӑн пуҫ хунӑ салтак тӑприпе
Ҫакна астумашкӑн тӑватӑп — тупа.

*1951*

*Айхи, Г. Тупа : [сӑвӑ] // Айхи, Г. Сӑвӑсемпе поэмӑсем / Г. Айхи. – Шупашкар, 1994. – С. 7-8.*